# АСĂМРА ЮЛНĂ ХАЛĂХ АРТИСЧĔ

**Васлей Давыдов-Анатри**

Чăваш халăх поэчĕ

ЭПĔ Чăваш халăх артисчĕпе, пултаруллă юрăçпа Мефодий Иванович Денисовпа пĕр вăхăтра пурăнма тӳр килнишĕн хама телейлĕ çын тесе шутлатăп. Эпир унпа тĕл пулнă вăхăтсенче пĕр-пĕрне яланах: пирĕн туслăх – ĕмĕре теттĕмĕр.

Вăл мана эпĕ чăваш композиторĕсемпе пĕрле çырнă юрăсене шăрантарса мĕн чухлĕ савăнтарман пулĕ?! Тавах ăна уншăн, тавах! Унпа хамăр тăван республикăри хула-ялсенче пулса концертсем, тĕл пулусем ирттерни яланах асăмра.

Мускавра, Дагестан, Пушкăртстан, Мари республикисенче чăваш музыкипе литература кунĕсене ăнăçлă ирттернине ырăпа аса илетĕп. Пур çĕрте те Мефодий Денисова чун-чĕререн юратса, хисеплесе кĕтсе илетчĕç.

Эпир, чăваш писателĕсемпе артисчĕсем, 1977 çулта Украинăра пултăмăр. Нежинск хулин педагогика институтĕнче вырăссен аслă писателĕ Н.В.Гоголь вĕреннĕ. Институт та унăн ячĕпе хисепленет. Çак чаплă института Мефодий Иванович чăваш, вырăс халăх юррисене питех те лайăх юрларĕ. Вĕçĕмсĕр алă çупни янăрарĕ. Акă халăх артисчĕ украин халăх юррисене шăрантарма пуçларĕ. Каллех тăвăллăн алă çупни кĕрлесе кайрĕ. Пирĕнпе пĕрле залра институт ректорĕ В.М.Горбач ларатчĕ, вăл чăтса тăраймарĕ – васкаса сцена çине хăпарчĕ. Куратпăр – унăн куçĕнчен куççуль юхать. Вăл халăх артистне ыталаса илчĕ те: «Эсир мана куçăмран куççуль юхнишĕн ан ятлăр. Вăл – савăнăç куççулĕ. Чăваш халăх артисчĕ украин халăх юррисене çав тери пултаруллă, илемлĕ юрласа пама пултарни ман чунăма çĕклерĕ», – терĕ.

Мефодий Денисовпа çул çӳреме питех те кăмăллăччĕ. Вăл хăйне яланах савăнăçлă тытатчĕ, кулăш ăстиччĕ. Пĕр çулхине Алексей Воробьев поэт мана акă мĕн каласа панăччĕ:

– Эпĕ филармони артисчĕсемпе Çĕрпӳ енче пултăм, ял ĕçченĕсем валли ирттерекен концертсене хутшăнтăм. Пирĕнпе Мефодий Денисов та çӳрерĕ. Вăл юрланине ял ĕçченĕсем пĕтĕм чун-чĕререн йышăнни çинчен калама кирлĕ мар ĕнтĕ, вăл пуриншĕн те паллă. Ун чухне çул çинче асран кайми пĕр ĕç пулса иртрĕ. Кĕрхи çанталăк. Çумăр çуса кайрĕ. Пирĕн автомашина Паваркассине çитеспе путса ларчĕ. Чылай тертлентĕмĕр. Мĕн тумалла? Пурте концерт пулаймасть тесе шикленетпĕр. Çак йывăрлăхран хăтăлма пире Мефодий Денисов пулăшрĕ. Ăна уншăн тав тăвассăм килет, – терĕ поэт.

Алексей Воробьев çак ĕç çинчен каласа панине тĕпе хурса «Упи касман çырминчен эпир касса килтĕмĕр...» ятлă сăвă çыртăм, ăна Денисова халалларăм. Ман çав сăвăри хăш-пĕр йĕркесене илсе кăтартас килет:

... Параппанçă, концертмейстер,
Юрăç, ташлакан пике...
Мĕнлерех кăна тĕртместпĕр? –
Чун кĕмест грузовике.
Кĕр сивви самай ĕретлĕ –
Шăлавар пĕр вĕçĕнчен
Вичкĕн çил чупса кĕрет те
Вашт тухать çеç тепринчен.
Çавăн чух, Михуть Денисов,
Шӳтлесе те юриех,
Теплерен аса эс илтĕн
Авалхи ĕç юррине.
Чĕресем каллех вăй пухнăн,
Аслати пек ăнсăртран
Кĕрлесе каять: «Эй, ухнем!»
Чи хăватлă нотăран.
Çамантрах – тĕнче йăлт урăх,
Ăшă çапрĕ кăкăра.
Васкаса саланчĕ юрă
Çырмари çич кукăра.
Кĕреçе те тупăнчĕ.
Ухлетсе тепре тĕртсен
Машин кăштах туртăнчĕ.
Чăхăмçă! Канмасăр утмĕ.
Кăмăлĕ кăшт çаврăнсан,
Шыв ĕçсе тăраннă ут пек
Вăл тапранчĕ вырăнтан...

Ку вăл шӳтлесе çырнă сăвă мар, пурнăçра чăн пулса иртнĕ ĕç çинчен каласа пани.

Çул хыççăн çул иртĕ. Пирĕн тăван халăхăмăрăн çав тери ăста, пултаруллă юрăçисем пулĕç. Чăваш халăх артистне Мефодий Иванович Денисова ĕмĕр-ĕмĕрех ырăпа аса илсе пурăнĕç. Унăн пултарулăхĕ, унăн ырă ячĕ пуриншĕн те ырă тĕслĕх пулса юлчĕ.